# Янра, чăваш сăмахĕ!

## *(Уяв сценарийĕ)*

***И.Н. ОРЛОВА, Л.Г. АГАФОНОВА,*** *Шупашкарти пĕтĕмĕшле вăтам пĕлÿ паракан 24-мĕш шкулта чăваш чĕлхи вĕрентекенсем*

**Тĕллевĕсем:** кашни вĕренекене Тăван çĕр-шыва, тăван чĕлхене юратма хавхалантарасси; хамăр пурăнакан çĕре упрама вĕрентесси; ачасен пултарулăхне, тавçăрулăхне, тимлĕхне аталантарасси.

**Кирлĕ хатĕрсем:** компьютер, проектор, экран, буклет тумалли А4 форматлă хутсем, тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсем, карточкăсем, клей, хачă, сас паллисем тата номерсем лартнă тĕрлĕ тĕслĕ хутсем.

### Уяв юхăмĕ

Зала чăваш тĕррипе, И.Я. Яковлева халалласа кăларнă стена хаçачĕсемпе илемлетнĕ, кĕнеке куравĕ йĕркеленĕ. Сцена çине ертсе пыракансем тата чăваш тумĕ тăхăннă вĕренекенсем тухаççĕ.

1-мĕш ертсе пыракан. Ырă кун пултăр, хаклă ачасем тата хисеплĕ хăнасем! Чи малтанах ирĕк парсамăр сире пурне те ытарайми илемлĕ, хаваслă çурхи ăшă кунсем çитнĕ ятпа саламлама. Çак çурхи кунсенче сире сарă хĕвел пек ăшă кăмăл, ырă туйăмĕмĕт, хаваслă кулă, иксĕлми телей сунатпăр!

2-мĕш ертсе пыракан. Ырă кун, чăваш чĕлхине юратакансем!

1-мĕш ертсе пыракан.

Чăваш çĕрĕ – юратнă çĕр-шывăм –
Çулсерен çĕнелсе улшăнать!
Сĕм вăрман, ылтăн хир, Атăл шывĕ –
Тĕрлĕ халăх кунта пурăнать.

2-мĕш ертсе пыракан.

Кам-ха, кам çак халăха пĕлмест:
Вăл çĕр пин сăмахпала пуплет,
Çĕр пин юрă-çемĕ кĕвĕлет,
Çĕр пин тĕслĕ тĕрĕ вăл тĕрлет…

1-мĕш ертсе пыракан.

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе!
Эс – чи пахи, эс – чун уççи.
Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе,
Пин чĕлхерен чи çепĕççи.

2-мĕш ертсе пыракан.

Çак чĕлхепе эп калаçатăп,
Куллен çыратăп та вулатăп.
Çак чĕлхепе эп мухтанатăп,
Куллен-кунах ăса туптатăп.

1-мĕш ертсе пыракан. Паян эпир сирĕнпе «Янра, чăваш сăмахĕ!» КВН ирттерĕпĕр. Эпир паян чăваш чĕлхи пуянлăхне, илемлĕхне, çепĕçлĕхне кăтартăпăр. Халăхăмăрăн чĕлхине, йăли-йĕркине сыхласа хăварас, чăн чăваш çынни пулас тесен тăван çĕре юратмалла, чăвашла вуламалла, калаçмалла, юрламалла, ташламалла.

2-мĕш ертсе пыракан.

Атьăр пĕрле ларар-и?
КВНа пуçлар-и?
Пĕрле вăйă выляр-и,
Хамăра кăтартар-и?

1-мĕш ертсе пыракан. Ăмăртăва хутшăнакансем паян 7 А тата 7 Б класс ачисем. Вĕсен пултарулăхне хаклакансем – хисеплĕ хăнасемпе вĕрентекенсем!

2-мĕш ертсе пыракан. Халĕ командăсем

хайсемпе паллаштараççĕ. Сирĕн ушкăн ятне, девизне, эмблемине маларах хатĕрлемеллеччĕ. Кунсăр пуçне Шупашкарта кăларакан пĕр-пĕр продукцие рекламăламалла. Тархасшăн!

Командăсем хайсемпе паллаштараççĕ. Кашни хайĕн рекламине кăтартать.

1-мĕш ертсе пыракан. Çырулăхчен чăваш халăхĕн сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхĕ анлă сарăлнă. Çавăпа та пирĕн халăхăн тупмалли юмахсем нумай. Халĕ сирĕн хăшĕ-пĕрин тупсăмне тупмалла. Кашни тĕрĕс хуравшăн пĕрер балл илетĕр.

1. Пĕр пӳртре пин çын пурăнать, кĕме-тухма шăтăк çук. *(Хăяр.)*

2. Алăсăр, пуртăсăр пӳрт лартĕ. *(Кайăк.)*

3. Пĕр майра пин хут пăхса макăртать. *(Сухан.)*

4. Хăй çавракa – уйăх мар, хӳреллĕ – шăши мар, ешĕл – вăрман мар. *(Çарăк.)*

5. Урасăр утать, алăсăр шаккать. *(Сехет.)*

6. Вĕрмест, çыртмасть – çынна кĕртмест. *(Çăра.)*

7. Вăкăр мар – майракаллă, старик мар – сухаллă. *(Качака.)*

8. Хĕлĕн-çăвĕн сип-симĕс ларать. *(Хыр, чăрăш.)*

9. Хĕлле шурă, çулла сăрă. *(Мулкач.)*

10. Каçхине вăранать, кăнтăрла çывăрать. *(Тăмана.)*

2-мĕш ертсе пыракан. Тепĕр конкурс – тимлĕх конкурсĕ. Сире «Пуянпа Куян» сăвă вуласа паратăп, пĕрремĕш команда сăвăри «*Куян*» сăмаха шутлать. Тепĕр команда – «*Пуян*» сăмаха.

Сĕмсĕр Пуян вăрмантан
Тытса килнĕ пĕр Куян.
Куян калать Пуяна:
«Пуян, яр-ха эс мана,
Мул паратăп эп сана».
Пуян ярать Куяна.
Куян калать Пуяна:
«Улталарăм эп сана», –
Тӳрех сикет вăрмана.
Çапла Куян Пуяна
Улталĕ-ши чăнахах? *(«Пуян» – 6, «Куян» – 5.)*

1-мĕш ертсе пыракан.

Чĕлхемĕр пулсан – эпир пуян,
Чĕлхемĕр пулсан – эпир патвар,
Чĕлхемĕр пулсан – эпир мăнаç,
Чĕлхемĕр пулсан – эпир хастар!

2-мĕш ертсе пыракан. Шупашкар – Чăваш Республикин тĕп хули. Пирĕн юратнă хула çулсерен илемленсе, çĕнелсе тата хăтлăланса пынăшăн пурсăмăр та чунтан савăнатпăр. Тепĕр конкурс – **ШУПАШКАР** сăмахри сас паллисене ылмаштарса лартса çĕнĕ сăмахсем тăвасси.

1-мĕш ертсе пыракан.

Упрар тăван чĕлхемĕре –
Чун-чĕрери хĕлхемĕре!
Унпа эпир ялан çĕнтерне,
Çĕр-шыв ятне çӳле çĕкленĕ.

2-мĕш ертсе пыракан. Чăваш çĕршывĕнче ырă, ĕçчен, пултаруллă çынсем пурăнаççĕ. Мĕн ĕлĕкрен чăвашсем хайсен сăпайлăхĕпе палăрнă. Чăваш Республикинче нумай паллă çын – писательсемпе поэтсем, композиторсемпе художниксем, артистсемпе ученăйсем – çуралса ӳснĕ. Камсем-ха вĕсем, чăваш ятне çĕклекенсем, чăваш халăхĕн мухтавлă çыннисем?

**«Пирĕн паллă ентешсем» кроссвордпа ĕçлени.**



1. Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, летчик-космонавт. *(Николаев.)*

2. Ăсчах, 17 томлă словарь авторĕ. *(Ашмарин.)*

3. Чăваш халăхне çутта кăлараканĕ. *(Яковлев.)*

4. Пирĕн ентеш, Аслă Елчĕкре çуралса ӳснĕ паллă этнопедагог, академик. *(Волков.)*

5. «Судра» комеди авторĕн, паллă композиторăн хушамачĕ. *(Павлов.)*

6. «Нарспи» поэма авторĕ. *(Иванов.)*

7. Пирĕн ентеш, граждан вăрçин паттăрĕ, пултаруллă командир. *(Чапаев.)*

1-мĕш ертсе пыракан.

Эп – чăваш ачи. Саватăп
Хамăрăн чăваш çĕрне.
Вăл кипке те ман, сăпка та,
Ăна манмăп ĕмĕрне.

2-мĕш ертсе пыракан.

Эп – чăваш ачи. Саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене,
Юратап юрра-сăвва та,
Купăса та, кĕслене.

3-мĕш класс ачисем пурне те юрăпа саламлаççĕ.

1-мĕш ертсе пыракан. Тепĕр ĕç – синквейн тăвасси. 1-мĕш ушкăнăн «тăван чĕлхе» сăмах майлашăвĕпе ĕçлемелле, 2-мĕш ушкăнăн – «тăван çĕр-шыв» ăнлавпа синквейн тумалла.

Икĕ ушкăн та синквейн туса ăна вуласа парать.

2-мĕш ертсе пыракан. Халĕ эпир сирĕнпе клоуз-тестпа ĕçлетпĕр. Сирĕн ваттисен сăмахĕсене тĕрĕс вĕçлемелле, пăнчăсем вырăнне кирлĕ цифрăсене лартмалла.

– Ĕç алă çумне … [1) *çыпçăнать*; 2) *çыпçăнмасть*; 3) *пырса ларать.* ]

– Ĕç апат ыйтмасть, вăл … [1) *выçтарса вĕлерет*; 2) *хăй тăрантарать*, 3) *перекетлет.*]

– Ĕç вăл ĕçленĕ май хăех … [1) *тухса ырать*; 2) *вĕрентсе ырать*; 3) *манăçса ырать.*]

4. Ĕç вăл – … [1) *ĕмĕр илемĕ*; 2) *пурнăç илемĕ*; 3) *кил илемĕ.*]

5. Ĕç ĕçлесси … [1) *тӳрĕ выртасси мар*; 2) *хăяккăн выртасси мар*; 3) *чалăш выртасси мар.*]

6. Ĕç çĕклет, … [1) *ӳркев ӳкерет*; 2) *наян ӳкерет*; 3) *ĕçчен ӳкерет*.]

7. Ĕç тăрантарать, кахал … [1) *пăсать*; 2) *юсать*; 3) *чапа кăларать*.]

8. Ĕç шуратмасть, … [1) *савăнăç шуратать*; 2) *хуйхă шуратать*; 3) *кахал шуратаь*.]

1-мĕш ертсе пыракан. Жюри пĕтĕмлетӳ тунă вăхăтра 8-мĕш класс хĕр ачисем пире чăваш ташшипе савăнтарĕç.

Чăваш ташши.

2-мĕш ертсе пыракан. Чăваш ачи чăвашах пултăр! Пирĕн республикăра чăваш сăвви, чăваш юрри янраса тăтăр! Çулсем иртсен пирĕн ачасенчен анлă тавракурăмлă, çивĕч ăс-тăнлă чăваш ăсчахĕсем, çыравçисем, вĕрентӳçисем, чăвашлăхшăн тăрăшакан ĕçченсем çитĕнĕç. Апла пулсан чăвашăн пуласлăхĕ пирĕн алăра!

Жюри членĕсем ăмăртăва пĕтĕмлетсе çĕнтерӳçĕсене диплом парса чысласçĕ, КВНа хутшăннă вĕренекенсене – сертификат. Пурте пĕрле «Илемлĕ, илемлĕ» юрă юрлаççĕ.

1-мĕш ертсе пыракан. Çакăнпа хамăрăн КВНа вĕçлетпĕр. Тавтапуç сире пурне те!

2-мĕш ертсе пыракан. Таймапуç сире пурне те!